27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 ИЮНЬ 7 ЮНКУН 112(6607) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮНӖН 5-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июнӗн 5-мӗшӗнче пирӗн çарсем Яссы хулинчен çурçӗр-хӗвеланӑçнерехри тата çурçӗртерехри районра тӑшманӑн пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене ӑнӑçлӑн сире-сире янӑ. Июнӗн 4-мӗшӗнче ку районра нимӗçсен 41 танкне пӗтерсе тӑкнӑ тата тӑшманӑн 33 самолетне персе ӳкернӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче улшӑнусем пулман.

Июнӗн 4-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 39 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ, ЙЫШЛӐН ВӖÇСЕ КАЙСА, КИШИНЕВ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛӖПЕ КИШИНЕВ ХУЛИНЧИ ВӐРÇА ОБЪЕКЧӖСЕНЕ ТАПАННИ

Июнӗн 5-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн авиаци, йышлӑн вӗçсе кайса, Кишинев чугун çул узелӗпе Кишинев хулинчи вӑрçӑ объекчӗсене тапаннӑ. Тапаннӑ вӑхӑтра чугун çул узелӗнче тӑшманӑн çар эшелонӗсем нумай пулнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула темиçе вунӑ çӗрте пушар тухнӑ, варывсем пулнӑ. Паровозсем, вӑрçӑ техники турттарса пынӑ вагонсемпе платформӑсем, горючи цистернисем, çавӑн пекех тата çар склачӗсем çуннӑ.

Пирӗн пӗр самолет хӑйӗн аэродромне каялла таврӑнман.

☆ ☆ ☆

Яссы хулинчен çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре тата çурçӗртерехре тӑшман çапла пирӗн позицисене атакӑлать. Питех те хаяр çапӑçусем кӑнтӑрла иртсен пуçланса кайнӑ, ун чухне нимӗçсем çапӑçӑва хӑйсен пехотипе танкӗсен çӗнӗ вӑйӗсене кӗртсе янӑ. Гитлеровецсем малтанлӑха пирӗн позицисем патнелле сывхарса çитнӗ, анчах та совет танкӗсемпе пехоти нимӗçсене хирӗç пырса çапса, каялла сирсе ывӑтнӑ. Совет артиллерисчӗсем ӑнӑçлӑ персе тӑнӑ, вӗсем тӑшманӑн танкӗсемпе салтакӗсене нумай пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр соединени чаçӗсем кункаçиччене çапӑçусенче 600 гитлеровеца ытла вӗлернӗ, нимӗçсен 21 танкне персе çунтарса янӑ.

Сывлӑшри çапӑçусенче каллех Совет Союзӗн Геройӗ Иван Кожедуб чапа тухнӑ. Кожедуб юлташ икӗ кун хушшинче нимӗçсен 5 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Тирасполь хулинчен çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре тӑшман отрячӗ, 5 кимӗ çине ларса, Днестр шывӗ урлӑ каçма хӑтланнӑ. Пирӗн боевой охраненире тӑнӑ боецсем гитлеровецсене пулеметпа пеме пуçланӑ, нимӗçсене нумайӗшне вӗлернӗ, чылайӗшӗ шыва путса вилнӗ. Пӗр участокра тӑшман пирӗн оборонӑн малти лини çинелле танкетка-торпеда яма тӑнӑ. Кӗçӗн лейтенант Донцов хӑюллӑ боецсен ушкӑнне илсе, танкеткӑна хирӗç тухнӑ та ун хыççӑн тӑсӑлса пыракан пралука касса татнӑ. Нимӗçсен танкеткине хамӑр командӑй пункта илсе пынӑ. Нимӗçсем татах та танкетка-торпедӑсем яма хӑтланнӑ, анчах вӗсен ӗçӗ пӗрре те ӑнӑçлӑ пулман. Пирӗн артиллеристсем танкетка-торпедӑсене советсен оборонин малти линийӗ патне çитме памаççӗ, пере-пере çӗмӗреççӗ.

* * *

Витебск хулинчен çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре разведчиксен ушкӑнӗсем, Васильев старши сержантпа Дроздов кӗçӗн лейтенант ертсе пынипе, çӗрле нимӗçсем тӑракан вырӑна кӗрсе кайнӑ. Совет боецӗсем тӑшман траншейисене сасартӑк вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та хаяр тытӑçура 30 гитлеровеца вӗлернӗ. Трофейӑсем тытса илсе тата тыткӑна илсе, разведчиксем хӑйсен чаçне таврӑннӑ.

Пӗр чаçри улӑ снайпер май уйӑхӗнче 33 нимӗç салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Скрылин кӗçӗн сержант тата Кабанов рядовой 12-шер нимӗçе, Гоголевпа Батурин рядовойсем — 10-шар нимӗçе, Русаковпа Хотин рядовойсем 9 нимӗçе вӗлернӗ.

* * *

Литовец партизанӗсен «Малалла» ятлӑ отрячӗ пӗр пысӑк ялти нимӗç тӗрмине тапаннӑ. Совет патриочӗсем тӗрме хуралне пӗтерсе тӑкнӑ та тӗрмери 27 совет гражданне ирӗке кӑларнӑ. Партизансем тӗрме пуçлӑхне-нимӗçе тыткӑна илнӗ. Партизансен «Оккупантсене вилӗм» тата «Жальгирис» ятлӑ отрячӗсем тӑшманӑн фронталла пыракан 4 çар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ, 2 паровоз тата 29 вагон çӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. 80 тӑшман салтакӗпе офицерӗ вилнӗ е аманнӑ.

* * *

Кӑнтӑрта Хӗрлӗ Çар енне нимӗç летчикӗ вӗçсе каçса анса ларнӑ. Вӑл çапла каланӑ: «Ку вӑрçӑра Германи аяла пулассине эпӗ лайӑх ӑнланса илтӗм, ӗнтӗ часах Германи пӗтсе ларас вӑхӑт çитмелле. Хӑшпӗр нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсем Германие мӗнле те пулин тӗлӗнмелле вӑй çӑлса хӑварасси çине çаплах шанаççӗ. Эпӗ тӗлӗнмелле вӑйсене ӗненместӗп. Хӑй çӗнтерессе шанман, çитӗнӳсем тӑвасса ӗненмен салтак — вӑл салтак та мар, салтакӑн чӗрекӗ кӑна. Германи çарӗ пур пӗрех пӗтессине ӑнланса илнӗ хыççӑн эпӗ вырӑссем енне вӗçсе каçрӑм та тыткӑна парӑнтӑм».

* * *

Эсэсовецсен «Аслӑ Германи» ятлӑ дивизийӗнчен тыткӑна лекнӗ лейтенант Готфрид Кунце çапла каласа кӑтартнӑ: «Иртнӗ çул хушшинче нимӗç офицерӗсен шухӑш-кӑмӑлӗсем питӗ пӑсӑлса кайрӗç. Эпӗ лайӑх пӗлнӗ офицерсенчен халӗ пӗри те ку вӑрçӑ Германи çӗнтерессипе пӗтессе шанмасть. Аслӑ офицерсем нимӗç армийӗн командованине тарӑхаççӗ, унӑн ӗçӗсене тиркеççӗ. Сӑмахран фон Напмер полковник çапла каларӗ: дивизисемпе корпуссен командирӗсем хӑйсем ирӗккӗн нимӗн те тума пултараймаççӗ, пӗр пуçарулӑ ӗç те кӑтартма пултараймаççӗ, юрӑхсӑр приказсене кӑна пурнӑçа кӗртсе пыма тивет вӗсене. Гитлер нимӗç генералӗсене пӗр ирӗк кӑна парать, çавӑ вӑл — нимӗç çарӗсене вырӑс çарӗсем енчен пырса çапма май туса пани кӑна пулать. Фон Напмер çапла каласнӑ чухне мансӑр пуçне тата темиçе офицер пурччӗ. Полковника никам та хирӗç калакан пулмарӗ. Эпир пурте ним шарламасӑр вӑл каланипе килӗшрӗмӗр».

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Чӑваш АСС Республикинчи вырӑнти промышленноçри, апат-çимӗç тата аш-какайпа сӗт-çу промышленноçӗсенчи, промысла коопераципе инвалидсен кооперацийӗнчи уйрӑмах палӑрнӑ рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси çинчен

Малалли. Пуçламӑшӗ «Чӑваш Коммуни» 109-мӗш, 110-мӗш тата 111-мӗш номерӗсенче).

84. Лев Абрамович **Зельдина** — инвалидсен «Чебторгин» артелӗн атӑ-пушмак çӗлекенне.
85. Вера Александровна **Зибировӑна** — Улатӑрти «Союз инвалидов» артель правлени председателӗн заместительне.
86. Иван Иванович **Иванова** — Чӑвашмельтрест управляющийӗ пулнӑскере.
87. Зинаида Ивановна **Ивановӑна** — Çӗмӗрле райпромкомбиначӗн рамщицине.
88. Захар Иванович **Иванова** — Куславкка районӗнчи Максим Горький ячӗпе тӑракан промартельти йывӑç ӗçӗсене тӑвакан токаре.
89. Прокофий Иванович **Иванова** — Шупашкарти арман комбиначӗн хуралçине.
90. Петр Иванович **Иванова** — Мӑн Шахчурари промартель председательне.
91. Христина Ивановна **Ивановӑна** — Октябрьски районри «Труд» промартелӗн çӗвӗçне.
92. Анна Афанасьевна **Иванушкинӑна** — Шупашкарти Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑри çӗвӗçе.
93. Антонина Афанасьевна **Иванушкинӑна** — Шупашкарти уйрӑм çынсен тумтирӗсене çӗлекен мастерскойӑн бригадирне.
94. Алевтина Игнатьевна **Игнатьевӑна** — Шупашкарти Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑри çӗвӗçе.
95. Алексей Игнатьевич **Игнатьева** — Тӑвай райпромкомбиначӗн управляющине.
96. Василий Игнатьевич **Игнатьева** — Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Деревообделочник» промартелӗн инструктор-технорукне.
97. Петр Игнатьевич **Игнатьева** — Чӑваш АССР апат-çимӗç промышленность Халӑх Комиссарӗн заместительне.
98. Николай Кузьмич **Ижогина** — Шупашкарти вылйӑх пусакан пунктӑн цех мастерне.
99. Аграфена Петровна **Ильинана** — Кувакино районӗнчи апат-çимӗç комбиначӗн сиропсем тӑвакан цехӗн работницине.
100. Кирилл Семенович **Ильина** — Чӑваш АССР Совнаркомӗнчи консультанта.
101. Валентина Викторовна **Ильинская-на** — Кувакино районӗнчи апат-çимӗç комбиначӗн мальтоза тӑвакан цехри мастера.
102. Рошида Сафиулловна **Кадыровӑна** — Куславкка районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан промартельти работницӑна.
103. Евдокия Ивановна **Калашниковӑна** — Шупашкарти вылйӑх пусакан пунктри колбаса тӑвакан цехӑн мастерне.
104. Прасковья Ивановна **Калинкинӑна** — Чӑваш АССР апат-çимӗç промышленность Халӑх Комиссарне.
105. Григорий Ильич **Канова** — Улатӑрти типографин директорне.
106. Сергей Васильевич **Канунникова** — Улатӑрти промартельти çӗвӗ çӗлекен цехӑн заведующине.
107. Варвара Степановна **Карасевӑна** — Октябрьски районри «Большевик» промартелӗн çӗвӗçне.
108. Зинаида Ивановна **Карамышевӑна** — Шупашкарти «Вышивка» промартельти тӗрӗ тӗрлекене.
109. Надежда Михайловна **Китаевӑна** — Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи «Портной» промартелӗн çӗвӗçне.
110. Перасковья Петровна **Климовӑна** — Шупашкарти «Красный кустарь» промартельти шлепке тӑвакана.

(Малалли пулать)

Ферапонт Головатый колхозникӗн примерӗпе

Саратов облаçӗнчи Ново-Покровск районӗнчи «Стахановец» колхозӑн колхозникӗ Ферапонт Петрович Головатый иртнӗ çулта хӑй перекетленӗ укçапа Хӗрлӗ Çар валли пӗр боевой самолет туяннӑччӗ. Унӑн пархатарлӑ пуçарӑвне пирӗн çӗршыври ӗççыннисем хапӑл туса кӗтсе илнӗччӗ — хӑйсем нумай вӑхӑт хушши перекетлесе усранӑ укçа-тенкӗне Хӗрлӗ Çар валли танксемпе самолетсем тума хывнӑччӗ.

Тӑван çӗршывӑн çулӑмлӑ патриочӗ Ф. П. Головатый юлташ кӑçал каллех Хӗрлӗ Çар валли тепӗр боевой самолет туянчӗ. Çак пархатарлӑ ӗçпӗн ӑна пирӗн юратнӑ çулпуçӑмӑр Сталин юлташ тепӗр хут тав турӗ.

Ферапонт Петрович Головатый Сталин юлташ патне çырнӑ çырура тӑван çӗршыври ӗççыннисене çапла чӗнсе каларӗ: «Тӑван çӗршыв умне вилӗм хӑрушлӑхӗ тухса тӑрсан, эпир хамӑр укçа-тенкӗсене хӗрхенмен. Халӗ те, Хӗрлӗ Çар воинӗсем тӑшмана пӗр вӗçертмесӗр йӗрлесе хӑваласа пынӑ чухне, вӗсем çӗнтерӳ хыççӑн çӗнтерӳ тунӑ чухне, совет паттӑрӗсем уйрӑм участоксенче тӑшман территорийӗ çине кӗрсе кайнӑ чухне, тӑшмана вилӗм шӑтӑкне тӗртсе ярса пуçӗнех пӗтерес тесе татӑклӑн пырса çапмалли кун килсе çитнӗ чухне тӑван çӗршыва хамӑрӑн мӗнпур ӗçлесе илсе перекетленӗ укçа-тенке парар», — терӗ.

Ферапонт Петрович Головатый чӗнӗвне рабочисемпе служащисем, совет интеллигенцийӗ, колхозниксемпе колхозницӑсем тулли кӑмӑлпа кӗтсе илчӗç. Совет халӑхӗ çӗнтерӳ тума Хӗрлӗ Çара хастарлӑ ӗçпе те, укçа-тенкӗпе те пулӑшать. Çавна эпир кунран кун ытларах та ытларах курса тӑратпӑр.

* * *

КУСЛАВККА, июнӗн 6-мӗшӗ. (Телефонпа). Поселокра пурӑнакан фотограф Иван Иванович Хузяханов юлташ Хӗрлӗ Çар валли самолетсемпе танксем тума 10.000 тенкӗ хывнӑ. Вӑл Сталин юлташ патне янӑ телеграммӑра çапла çырнӑ: «Хӗрлӗ Çар валли самолетсем тума эпӗ 10.000 тенкӗ паратӑп, манӑн укçа гитлеровецсене тӗпӗ-йӗрӗпех çапса аркатма пулӑштӑр».

Çак кунсенче Хузяханов юлташ Сталин юлташран телеграмма илнӗ. Хузяханов юлташа Сталин юлташ Хӗрлӗ Çар ячӗпе тав туса саламланӑ.

* * *

Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссариачӗн коллективӗ, Ферапонт Головатый чӗнӗвне ырласа, Хӗрлӗ Çар валли самолетсемпе танксем тума укçа пухма тытӑнчӗ. Кӗске вӑхӑтрах Халӑх Комиссариатӗнчи работниксем 14.085 тенкӗ пухнӑ. Вӑл шутран 7.495 тенкине хывнӑ та ӗнтӗ. Ланцков юлташ 900 тенкӗ, Бородинпа Платонов юлташсем 500-шер тенкӗ тата 8 çын 200-шер тенкӗ хывнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

РСФСР Совнаркомӗпе ВЦСПС 1944 çулхи майӑн 16-мӗшӗнче «РСФСР апат-çимӗç Халӑх Комиссариачӗн районсенчи тата хуласенчи комбиначӗсем хушшинчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн условийӗсене çирӗплетесси çинчен» йышӑннӑ постановлени тӑрӑх ЧАССР Совнаркомӗ Чӑваш АССР Апат-çимӗç промышленность Халӑх Комиссариачӗн социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑ апат-çимӗç комбиначӗсене пама Чӑваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тунӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне уйӑхри ӗç итогӗсем тӑрӑх Чӑваш АССР Апат-çимӗç промышленность Халӑх Комиссариачӗпе вырӑнти промышленноçра ӗçлекенсен профсоюзӗн Обкомӗ тӑратнипе параççӗ. Уйӑхри ӗç итогӗсене кашни уйӑхрах 8-мӗш числаран кая юлмасӑр тӑваççӗ тата хаçатсенче пичетлесе кӑлараççӗ.

Республикӑри социализмлӑ ӑмӑртура мала тухакан районри е хулари апат-çимӗç комбиначне укçа парса премилеççӗ. Преми хисепӗ çакӑн пек пулать: уйӑхра 1926—27 çулсенчи хакпа 20.000 тенкӗлӗх е ытларах продукци туса кӑларсан — 8.000 тенкӗ, уйӑхра 8.000-рен 20.000 тенке çити продукци кӑларсан — 6.000 тенкӗ, уйӑхра 8.000 тенкӗлӗхе çити продукци туса кӑларсан — 4.000 тенкӗ преми параççӗ.

Тинӗс-Çар Флочӗн офицерӗсемпе сержанчӗсене Совет Союз Геройӗн ятне пани

Нимӗç захватчикӗсене хирӗç пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑçланӑшӑн тата çавӑн чухне хастарлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн, СССР Верховный Совет Президиумӗн кӑçалхи майӑн 31-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, Тинӗс-Çар Флочӗн офицерӗсемпе сержанчӗсен пӗр ушкӑнне, Ленин орденӗпе тата «Ылттӑн Çӑлтӑр» медальпе наградӑласа, Совет Союз Геройӗн ятне панӑ.

Совет Союз Геройӗн ятне мӗн пурӗ 19 офицерпа сержанта панӑ. (ТАСС)

Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен Верховнӑй командованийӗн штабӗ пӗлтерни

ЛОНДОН, июнӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен Верховнӑй командованийӗн штабӗ 1-мӗш №-лӗ коммюнике пичетлесе кӑларнӑ.

Коммюникере çапла каланӑ: союзниксен Эйзенхауэр генерал командир пулса ертсе пыракан тинӗс-çар вӑйӗсем, сывлӑш çарӗн пысӑк вӑйӗсем пулӑшса тӑнипе, паян ирхине союзниксен çарӗсене Францин çурçӗрти сыранӗ çине антарма тытӑннӑ.

Эйзенхауэр генералӑн приказӗ

ЛОНДОН, июнӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, союзниксен çарӗсен кашни салтакне континент çине каçмалли операци пуçланиччен Эйзенхауэр генералӑн приказне панӑ. Приказра çапла каланӑ:

«Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен салтакӗсемпе матросӗсем тата летчикӗсем! Эсир хреслӗ аслӑ похода тухас умӗнхи самантра тӑратӑр, çав похода тухма эпир нумай уйӑхсем хушши ӗмӗтленнӗ. Пӗтӗм тӗнче Сирӗн çине пӑхса тӑрать. Пӗтӗм тӗнчери ирӗклӗхе юратакан çынсен шанчӑкӗсем тата кӗлтуса пехилленисем Сирӗнпе пӗрле. Ытти фронтсенчи хамӑрӑн паттӑр союзниксемпе тата хӗçпӑшал тӗлӗшӗнчи тӑвансемпе пӗрле, Эсир нимӗçсен çар машинине çапса аркатассине пурнӑçа кӗртетӗр, Европӑри пусмӑрти халӑхсене нацистла тиранирен хӑтаратӑр, ирӗклӗ тӗнчере пире хӑрушсӑрлӑх туса паратӑр.

Сирӗн задача çӑмӑл пулмасть. Тӑшман лайӑх вӗренсе хатӗрленнӗ, лайӑх хӗçпӑшалланнӑ тата çапӑçусенче писӗхнӗ. Вӑл хаяррӑн çапӑçӗ. Анчах эпир 1944 çулта пурӑнатпӑр. Нацистсем 1940—1941 çулсенче çӗнтерӳсем туса пынӑ вӑхӑтранпа нумай улшӑнусем пулса иртрӗç. Пӗрлешнӗ нацисем, тӑшманпа хирӗç-хирӗç тӑрса çапӑçса, нимӗçсене пысӑк поражнисем тӳстерчӗç. Эпир сывлӑшра наступлени туса пыни вӗсен сывлӑшри вӑйӗсене нумай пусарчӗ тата вӗсен тип çӗр çинче вӑрçӑ вӑрçас пултарулӑхне те чакарчӗ. Хамӑрӑн шалти фронт пире хӗçпӑшалсемпе боеприпассем тӗлӗшӗнчен тӑшманран вӑйлӑрах пулма тата хамӑра валли вӗрентсе хатӗрленӗ салтаксен пысӑк резервӗсене шухса хатӗрлеме май пачӗ. Лару-тӑру улшӑнчӗ. Мӗнпур тӗнчери ирӗклӗ çынсем çӗнтерӳ патне пӗрле утаççӗ. Эсир хӑюллӑ та паттӑр пулассине, хӑвӑрӑн тивӗçлӗхӗре чӗререн парӑнса тӑрассине тата çапӑçура ӑста пулассине эпӗ туллин шанса, ӗненсе тӑратӑп. Татӑклӑ çӗнтерӳ тунисӗр пуçне эпир нимӗнпе те килӗшмӗпӗр.

Ӑнӑçу сунатӑп! Çак аслӑ та пархатарлӑ ӗçе ӑнӑçлӑ пулма хӑватлӑ турӑ ырӑ сунса пехиллетӗр!»

Континент çине каçакан салтаксене çак приказа вӗсем карапсем çине ларнӑ хыççӑн валеççе панӑ. Приказа командирсем экспедициллӗ чаçсен ытти мӗнпур çарӗсене те вуласа панӑ.

Премьер-министр Черчилль тухса калани

ЛОНДОН, июнӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви — премьер-министр Черчилль паян общинӑсен палатинче тухса калани çинчен пӗлтерет. Союзниксен Италири вӑрçӑ операцийӗсем çинчен каласа парса, Черчилль çапла пӗлтернӗ: кӗçӗр çӗр каçиччен тата июнӗн 6-мӗшӗнче ирхине ирех Европа континенчӗ çине союзниксен малтанхи пысӑк десанчӗсене антарнӑ. Тӑватӑ пине çити карапран тӑракан çав тери пысӑк вӑйсем Ла-Манш урлӑ каçрӗç. Черчилль каланӑ тӑрӑх, нимӗçсен сыранри батарейисен вут-çулӑмне чылаях пусарнӑ. Тинӗсри чӑрмавсем эпир шикленнинчен çӑмӑлрах пулчӗç. «Çакна шантарса калама пулать те ӗнтӗ, — тенӗ Черчилль, — тактика тӗлӗшӗнчен чӑннипех те кӗтмен çӗртен тунӑ ӗç пулчӗ».

Англипе Америка çарӗсене кӗрешӳре пӗрремӗш линири самолетсем — вӑтамран 11.000 самолет пулӑшса тӑраççӗ, вӗсене кирлӗ самант килсе тухнӑ май çапӑçӑва кӗрте-кӗрте яма пулать.

Черчилль çапла каланӑ: тӑшман линийӗсем хыçне сывлӑшран массӑллӑ десантсем ӑнӑçлӑн антарнӑ. Сыранри тӗрлӗ пунктсене тинӗсрен десантсем анаççӗ.

«Халлӗхе, — тенӗ Черчилль, — операцисене хутшӑннӑ командирсем пур ӗç те план тӑрӑх пулса пыни çинчен пӗлтереççӗ. Пӗр иккелленмесӗрех çакна калама пулать: çак гигантла пысӑк операци халиччен пулнӑ кирек мӗнле операцирен те чи кӑткӑс та йывӑр операци пулса тӑрать».

«Эпир, — тенӗ малалла Черчилль, — çапӑçусем пынӑ май тӑшмана умлӑн-хыçлӑн ахах кӗтмен япаласем туса парасси-не шанатпӑр. Çапӑçусен анлӑшӗпе хастарлӑхӗ сывӑхри темиçе эрне хушшинче тӑтӑшах ӳссе вӑйланса пырӗ. Операцисем малалла мӗнле каясси пирки эпӗ малтанах каласа хума хӑтланмӑп, — тенӗ Черчилль. — Анчах та эпӗ çакна калама пултаратӑп: союзниксен пӗтӗм çарӗсенче пур тӗлӗшрен те пӗрлӗх пуç пулса тӑрать. Эпир Америкӑри туссемпе хӗçпӑшал тӗлӗшӗнчи тӑванлӑхпа пӗтӗçнӗ. Юлашки темиçе кун хушшинче карапсем çине ларнӑ чухне эпӗ хам сӑнаса курнӑ тӑрӑх, çарсен шухӑш-кӑмӑлӗ çав тери чаплӑ темелле».

Черчилль паян, кӑнт каярах, хӑй çӗнӗ хыпарсем пӗлтересси çинчен каланӑ.

Эйзенхауэр генерал радио тӑрӑх тухса калани

ЛОНДОН, июнӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Эйзенхауэр генерал, Европӑна тата пӗтӗм тӗнчене чӗнсе, çапла каланӑ: «Континент çине анни — Европӑна хамӑрӑн вырӑссемпе союзниксемпе пӗрле пулса ирӗке кӑлармалли пӗрлӗхлӗ планӑн пайӗ пулса тӑрать. Кам тӑшманпа пӗрле пулнӑ, вӗсене сирсе пӑрахатпӑр», тенӗ. Эйзенхауэр генерал чӗнсе каланине Британири радиовещани корпорацийӗ урлӑ панӑ.

Б. Баррос генералпа Д. Дин генералӑн заявленийӗ

Союзниксен Хӗвеланӑç Европӑри экспедициллӗ çарӗсен Верховнӑй главнокомандующийӗ пире телеграфпа халь кӑна çапла пӗлтерчӗ: Британипе Америка тата Канада çарӗсем паян ирхине Франци анна, çапла вара Европӑра иккӗмӗш фронт уçӑлать.

Эпир, Британипе Америка çар миссийӗсен пуçлӑхӗсем, çак вӑхӑт çитнине — пирӗн тӗп вӑйсем татӑклӑ çӗнтерӳ тӑвас çул çинче Хӗрлӗ Çарпа пӗрлешрӗç тесе каламалли вӑхӑт çитнине пӗтӗм чун-чӗререн хавхаланса саламлатпӑр.

Тӑшман умне халӗ хӑрушӑ картина тухса тӑчӗ. Паян пуçланнӑ операцисем Италире ӑнӑçлӑн аталанса пыракан вӑрçӑ ӗçӗсем пулӑшнипе пулса пырӗç. Иртнӗ эрнере пирӗн авиаци Хӗрлӗ Çарӑн авиацийӗпе ӑнӑçлӑн пӗрле пулса кӗрешме пӗтӗçрӗ, унпа пӗрле вӑл сывлӑшран тӑшмана мӗнпур енчен пыра-пыра çапӗ, тӑшманӑн тинӗс çулӗсене вара пирӗн пӗрлешнӗ флот малтанхи пекех хупӑрласа тӑрӗ.

Тен, çӗнтерӳ часах пулмӗ. Хаяр тӑшман, эпир ӑна **Хӗвеланӑçӗнчен, Кӑнтӑртан** тата **Хӗвелтухӑçӗнчен** пӗрле пыра-пыра çапнине сирме хӑтланса, мӗнпур вӑйне хурӗ, анчах Пӗрлешӳллӗ Штатсемпе Британири Халӑхсен Туслӑхӗн боецӗсем, союзлӑ Хӗрлӗ Çарӑн геройла çарӗсемпе пӗрле тӑрса кӗрешсе, çӗнтерӳпе мир патне çитмелли, хӑйсем пурте çав тери нумайранпа та çав тери хытӑ ӗмӗтленекен мир патне çитмелли çул çинчи мӗнпур чӑрмавсене çӗнтерӗç.

БРОКАС БАРРОС,
Генерал-лейтенант,
Британин ССР Союзӗнчи Çар Миссийӗн Пуçлӑхӗ.

ДЖОН Р. ДИН,
США çарӗн Генерал-майорӗ,
США-н ССР Союзӗнчи Çар Миссийӗн Пуçлӑхӗ.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРӖСЕМ АННӐ РАЙОНРАН КИЛЕКЕН ХЫПАРСЕМ

ЛОНДОН, июнӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин вӑрçӑ ӗçӗсене пӑхса тӑраканӗ Çурçӗр Франци сыранӗнчи вӑрçӑ ӗçӗсем июнӗн 6-мӗшӗнче кӑнтӑрла тӗлне мӗнле пулса пыни çинчен çакӑн пек хыпар пӗлтернӗ: «Операцисем ӑнӑçлӑ аталанса пыраççӗ пулмалла. Германи авиацийӗ йышлӑн тухни халлӗхе курӑнмарӗ-ха. Эпӗ Франци территорийӗ урлӑ нумай миля шалалла вӗçсе кӗтӗм, анчах союзниксен çарӗсем аннӑ вырӑнсем патнелле Германин танковӑй дивизийӗсем куçнине курмарӑм. Сывлӑшра союзниксен самолечӗсем çав тери йышлӑн вӗçсе çӳреççӗ.»

ЛОНДОН, июнӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ çарӗсен Верховнӑй командованийӗн штабӗ çапла пӗлтерет: тинӗс тупписем — 4 дюймлисенчен пуçласа 16 дюймлисене çитиччен — пӗтӗмпе 640 тупӑ тӑшманӑн сыранри тӗреклетнӗ пункчӗсем çине персе тӑраççӗ, çапла вӗсем союзниксен çӗр çинчи çарӗсен ӗçне пулӑшаççӗ.

Уинстон Черчилль вӑрçӑ ӗçӗсем мӗнле пыни çинчен

ЛОНДОН, июнӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, паян каçхине общинӑсен палатинче Черчилль хӑйӗн иккӗмӗш хут каланӑ сӑмахӗнче çапла пӗлтернӗ:

«Эпӗ общинӑсен палатине вӑрçӑ ӗçӗсем питех те çителӗклӗ аталанса пыни çинчен пӗлтерме пултаратӑп. Иртнӗ каç çав тери хӑрушла курӑннӑ нумай хӑрушлӑхсемпе йывӑрлӑхсем халӗ ӗнтӗ хыçала тӑрса юлчӗç. Тинӗс урлӑ каçассине эпир малтан шухӑшланинчен чылай сахалтарах çухатусем тӳссе туса иртернӗ. Пирӗн авиаци бомбӑсем пӑрахса аркатнипе пула, тӑшманӑн сыранри артиллерийӗ хирӗç тӑрассине чылай вӑйсӑрлатнӑ, пирӗн карапсем çинчен пени вара, тӑшман батарейисен вут-çулӑмне пусарса, хамӑрӑн задачӑна пурнӑçа кӗртме чӑрмантармалла мар туса хунӑ.

Англин, Америкӑн тата союзлӑ çӗршывсен çарӗсене (вӗсем мӗнле национальноçсенчен е çӗршывсенчен пулнине эпӗ списока туса кӑтартмӑп) анлӑ фронтра сырана антарасси ӑнӑçлӑ пулса иртрӗ, пирӗн çарсем хӑшпӗр тӗлте хӑйсем аннӑ çӗршыва темиçе миля шала кӗрсе кайрӗç. Анлӑ фронтра ӗнтӗ опорнӑй пунктсем туса хунӑ.

Пирӗн авиадесант чаçӗсене антарни çав тери чаплӑ операци пулса тӑчӗ. Çав десантсем хӑйсен хисепӗпе, пӗр иккӗленмесӗрех калама пулать, халиччен тӗнчере пулнисенчен пуринчен те иртсе кайрӗç. Авиадесант чаçӗсене антарассине питех те сахал çухатусем тӳссе тата çав тери тӗрӗс туса иртернӗ. Сутӑлас умӗнхи питех те кӗске вӑхӑтра куç хӑйне уйрӑм куракан условисене пула, çав операци уйрӑмах хытӑ шухӑшлаттаратчӗ.

Çакӑ питех те пулма пултарнӑ: юлашки самантра мӗн те пулин сиксе тухса, авиадесант çарӗсене хӑйсен ӗçне пурнӑçа кӗртмешкӗн чӑрмантарма пултарнӑ. Сантталӑк условийӗсене кура питӗ шикленмелле утӑм тумалла пулнӑ, анчах Эйзенхауэр генералӑн хӑюлӑхӗпе хастарлӑхӗ мӗн тумаллине, çав мӗнпур питех те йывӑр тата никам та контрольлеме тивӗçлӗ мар ыйтусем тӗлӗшпе мӗн йышӑнмаллине, татса пачӗ.

Авиадесант çарӗсем тӗреклӗн çирӗпленсе ларчӗç, авиадесантсем антарас ӗçе вара эпир кӗтнинчен сахалтарах, чылай сахалтарах çухатусем тӳссе туса иртернӗ. Тӗрлӗ пунктсенче çапӑçусем пыраççӗ. Эпир темиçе кирлӗ кӗпере, тӑшман сирпӗнтерсе ярайманскерсене, тытса илтӗмӗр. Çапӑçу Кан хулинче тата çӗршывра шалта пырать. Çакӑ малтанхи питех те паха утӑм — пурнӑç тӗлӗшпе паха та кирлӗ утӑм пулса тӑракан событисем сывӑх кунсемпе эрнесем хушшинче çапӑçусем мӗнле аталанса кайасси тӗлӗшпе нимӗнле кӑтартусем те памаççӗ-ха, мӗншӗн тесен, тӑшман халӗ ӗнтӗ çав районa вӑйсем пухса тӑратмашкӑн хӑтланса пӑхма пултарать. Апла пулас пулсан, часах хаяр çапӑçусем пуçланӗç. Эпир хамӑрӑн çарсене мӗн чухлӗ хӑвӑрт куçарса тӑма пултарнине кура, тӑшман вара хӑйӗн çӗнӗ резервӗсене илсе пыма пултарнине кура, çав çапӑçусем татти-сыпписсӗр пулса пырӗç. Çапла ӗнтӗ, эпир питех те ответлӑ тапхӑра кӗретпӗр, çав тапхӑра эпир хамӑрӑн аслӑ союзниксемпе пӗрле, таса чӗрепе тата ырӑ туслӑ пулса кӗретпӗр».

Союзниксен çарӗсем аннӑ районри лару-тӑру

ЛОНДОН, июнӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Çар корреспонденчӗсем союзниксен çарӗсем Çурçӗр Францие анни çинчен тӗплӗнрех çакӑн пек пӗлтереççӗ: çарсем ирхине 6 сехетпе 8 сехет хушшинчи вӑхӑтра анма тытӑннӑ. Малтанхи пӗлтерӳсем ӗç ӑнӑçлӑ пыни çинчен калаççӗ. Англи тральщикӗсем Франци сыранӗ патне пымалли вырӑнсене анлӑ фронтра минӑсенчен тасатнӑ. Çакӑ вара тинӗс-çар флочӗн карапӗсене сыран çинелле пеме лайӑх май туса панӑ. Унтан союзниксен авиацийӗпе мӗнпур йышши карапсем Германин сыран хӗрринчи укреплениййӗсем тата артиллери позицийӗсем çине бомбӑсем пӑрахма, тупӑсенчен пеме тытӑннӑ.

Кӗрешӗве хутшӑннӑ авиацин йышӗ халиччен пулнӑ пур хисепрен те нумай иртсе кайть. Сывлӑшра сыран патнелле бомбӑсем е десант çарӗсене турттарса каякан самолетсен пӗр лӑпланми шавӗ кӗрлесе тӑнӑ. Черетлӗ рейсран таврӑнакан акӑлчан летчикӗсем Америкӑн «Вӗçекен крепость» йышши самолечӗсем, Франци сыранӗ патнелле калканӗкерсен, гигантла сывлӑш флочӗпе тӗл пулнӑ. Авиадесант чаçӗсене турттаракан самолетсем сывлӑшра хӑйсем хыççӑн салтаксем ларнӑ планерсене туртса пынӑ.

Акман çĕр пĕр гектар та хăвармалла мар

Çуракине вĕçлемелли вунăкунлăх итогĕсем тăрăх

Çуракине вĕçлемелли фронтовой вунăкунлăх иртрĕ. Çак вунăкунлăхра чылай районсем, фронтри пек ĕçлесе, çураки планне ăнăçлă тултарчĕç. Красноармейски, Вăрнар, Чурачăк, Çĕрпӳ, Элĕк, Муркаш, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Калинино, Сĕнтĕр, Куславкк, Вăрмар, Шăхасан, Октябрьски районĕсенчи колхозсем хыççăн паян Канаш районĕ те çураки планне тултарчĕ. Елчĕк, Етĕрне, Ишлей, Тăвай районĕсенчи колхозсем ака ĕçне пĕтерсе пыраççĕ.

Малта пыракан районсен çĕнтерĕвĕсем колхозниксемпе колхозницăсене кăна мар, пур ĕççыннисене те савăнтараççĕ, çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ. Çураки ĕçĕсене вĕçленĕ районсенчи колхозниксемпе колхозницăсем ирхи çĕртме тума, çум çумлама тытăнчĕç. Калинино районĕнчи колхозсем юлашки кунсенче кăна 1748 гектар çинчи тырпула çумкурăксенчен тасатнă, 750 гектар ытла çĕртме тунă, çуртыррисене апатлантарасси те кунта анлăн пырать. Çакăн пек тĕслĕхсене Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски, Вăрнар тата ытти районсенче те курма пулать.

Фронтовой вунăкунлăхра малта пыракан районсем çĕршер гектар планран ирттерсе акнă. Пĕр Красноармейски районĕ кăна планран ирттерсе 300 гектара яхăн акнă. Кун пек паха примерсене Сĕнтĕрвăрри, Чурачăк, Çĕрпӳ тата ытти районсенчен те илсе кăтартма пулать.

Малта пыракан районсенчи колхозсен çĕнтерĕвĕсем тем пек пысăк пулсан та, вĕсем юлса пыракан районсен çитменлĕхĕсене витме пултараймаççĕ. 10—11 районри колхозсем юлса пыни, çураки унта ытла та вăраха тăсăлни республикăна кайри вырăна хăварать, малта пыракан районсен çитĕнĕвĕсене тĕксĕмлетет. Çĕмĕрле, Первомайски, Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай, Улатăр, Пăрачкав, Шăмăршă, Куказино районĕсем çураки ĕçĕсене вăраха янине нимĕнле сăлтавсемпе те ăнлантарма çук.

ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕн секретарĕ Г. Захаров юлташ фронтовой вунăкунлăхăн малтанхи кунĕнче çапла каларĕ: фронтовой вунăкунлăх вăхăтĕнче пирĕн колхозсем кашни кун 500-шер гектар акмалла, тракторсемпе тата лашасемпе эпир çакăн чухлĕ ĕçлеме пултаратпăр, терĕ. Анчах Захаров юлташ хăйĕн сăмахне пурнăçлаймарĕ. Вунă кунлăхăн малтанхи кунĕнчех Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем 500 гектарăн сурринче 260 гектар кăна акрĕç. Уйрăм кунсенче вара 200 гектар çеç акни те пулнă.

Шăмăршăпа Йĕпреç районĕсен руководителĕсем çуракин малтанхи кунĕсенче: пирĕн хирсем вăрман çумĕнче выртнăран тăпра чĕрĕ, лашасем вăйсăр, — тесе сăлтав тупма шутларĕç. Анчах та тăпра типсе çитсен те Шăмăршă районĕ кирлĕ пек хăвăртлăхпа ĕçлеймерĕ. Майăн 30-мĕшĕнче кунта пурĕ те 66 гектар, 31-мĕшĕнче 184 гектар кăна акнă. Паллах, çак хăвăртлăхсем вĕсем фронтри пек ĕçлени çинчен мар, ĕçе ячĕшĕн çеç туса пыни çинчен калаççĕ. Первомайски, Пăрачкав, Çĕмĕрле районĕсем те çуракинче кирлĕ пек хăвăртлăхпа ĕçлеймерĕç.

Çак районсенче çураки ĕçĕсем ытла та вăраха тăсăлни, чăн малтанах, унти партипе совет организацийĕсем, çĕр ĕç органĕсенче ĕçлекенсем çураки ĕçне колхозниксемпе колхозницăсене кирлĕ пек мобилизацилеменнинчен тата ĕçе большевикла ертсе пыма пĕлменнинчен килет. Кунта урăх сăлтав шырама та кирлĕ мар.

ВКП(б) Первомайски, Шăмăршă, Çĕмĕрле райкомĕсен секретарĕсем Долгов, Дубов, Григорьев юлташсем, ака ĕçĕсем çинчен каласнă чухне, чылай колхозсенче лашасем вăйсăрри çине кăтартма пăхатчĕç, çав вăхăтрах ку районсенчи МТС-сем паянхи куна çитсе те хăйсен çуркунне тумалли ĕçĕсене вĕçлеме пултарайманнине вара, мĕнле сăлтавпа ăнлантарма пулать-ха? Паллах, кунта нимĕнле сăлтав та шырама кирлĕ мар, пĕтĕм сăлтав çуракинчи хĕрӳ ĕçе организацилеме пĕлменнинче тăрать. Октябрьски, Вăрмар тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсенче те лашасем начаррине тупма пулать, анчах та унта лашасене кантарас, хиртех çитерес ĕçе организациленĕ, çапла вара çав районсем çуракинче малта пыракансен ретне тăчĕç.

Партипе правительство пирĕн колхозсене яланах пулăшса пынă, кăçал та пулăшсах пыраççĕ. Эпир ăна пирĕн государство, вăрçă вăхăтне пăхмасăрах, пирĕн колхозсене вăрлăх парса пулăшнинчен те куратпăр. Çавăнпа та республикăри кашни районăн, кашни колхозăн çураки планне ытлашшипех тултарасшăн кĕрешмелле, акмасăр пĕр гектар та хăвармалла мар. Акмасăр юлнă çĕр колхоз руководительне намăслантарать, вăл государствăпа фронт умĕнче айăпа кĕнине кăтартакан тĕслĕх пулса тăрать.

Кашни районри парти, совет, çĕрĕç органĕсенчи работниксем, колхоз председателĕсем вĕсен çуракинчи ĕçĕсене пĕтĕм çĕршыв тимлĕн сăнаса тănине ăнланса илме тивĕç. Çуракинче çĕнтерӳ туни — фронтра çĕнтерӳ тунипе пĕрех. Кашни колхоз, унăн руководителĕ фронтпа çĕршыв умĕнче ответ тытать, çуракине хăвăртрах вĕçлени — фронта паракан чи лайăх пулăшусенчен пĕри пулса тăрать. Çураки планне хăвăртрах тултарассишĕн, пур пек çĕрсене пĕтĕмĕшпех акса пĕтерессишĕн мĕнпур вăй-хала хурса ĕçлемелле. Партипе комсомол организацийĕсен пĕр гектар та акмасăр хăварас мар тесе, колхозниксемпе колхозницăсен анлă массине мобилизацилемелле.

КАНАШ РАЙОНĔ ÇУРАКИ ПЛАННЕ ТУЛТАРЧĔ

КАНАШ, июнĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем паянхи кун тĕлне 10.821 гектар вырăнне 10.824 гектар акса çураки планне тултарнă. Тĕштырăсем 7.985 гектар вырăнне 8.158 гектар акнă. Тырăсем акас тата çĕрулми лартас ĕç малалла пырать.

51 колхоз çум çумлама тухнă

ИШЛЕЙ, июнĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Тырă калчисем пур колхозсенче те лайăх ӳсеççĕ. Колхозниксем вĕсене çумкурăксенчен тасатас ĕçе тытăнчĕç. Районри 51 колхозăн çум çумлама тытăннă. «Большевик», «Богатырь», «11 лет Чувашии» колхозсем [illegible] колхозниксем пĕтĕмпех тасатнă. «Осоавиахим» колхоз çум çумлама [illegible] Унăн икĕ лашине «Красная Горка» колхоза [illegible]

Г. СЕРЕБРЯКОВ.

Çураки планне кашни колхозăнах тултармалла

СОВЕТСКОЕ, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Çураки вĕçлемелли вунăкунлăхра районри пур колхозсем çĕнтерӳшĕн тупăшаççĕ. [illegible] «Восход» колхоз [illegible] «Трудовик» колхоз [illegible] çĕрулми 27 гектар лартмалла. Колхоз председателĕ [illegible] 10 гектар валли вăрлăх хатĕрленĕ [illegible] юсаман пирки, тырăсене çапла акнă. Халĕ вара тĕлĕн-тĕлĕн шăтман вырăнсем [illegible] Шăрпашри «Искра», Одеркари Энгельс ячĕллĕ колхозсем [illegible] «Трудовик» колхоз [illegible]

Т. ИВАНОВ.

Фронтовиксен çемйисене пулăшма

Республикăри колхозсенче çураки планне тултарас хыççăн фронтовиксен çемйисене пулăшмалла [illegible] Шупашкар районĕнче лайăх [illegible] валли 90 гектар ытла акнă. [illegible] 0,75 гектар, «Дружба» колхоз—1 гектар, «Прожектор» колхоз — 1 гектар [illegible] Улатăр, Шăмăршă, Йĕпреç районĕсенче [illegible] Хĕрлĕ Сара [illegible]

Ю. ИВАНОВСКИЙ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Агитколлектив руководителĕ

Павел Николаевич Печников — çамрăк коммунист. Вăл Хыршусĕнчи «Победа» колхозра счетовод пулса ĕçлет. Фронтран аманса килсенех, колхозри парттруппа ăна агитколлектив руководителĕ пулма çирĕплетнĕ.

Фронтовик Печников юлташ, кĕрешӳре пиçĕхсе çитнĕскер, хăйне шанса панă ĕçе тивĕçлĕн пурнăçлама тытăннă. Пултарулă та ĕçчен колхозниксене агитаци ĕçне явăçтарнă вăл, вĕсемпе куллен мĕнле ĕçлесе пымалли çинчен калаçусем ирттернĕ е уйрăмăн тĕл пулса каласнă.

Кăçалхи çуракине тухас умĕн агитколлектив составне татах темиçе колхозника çĕнĕрен явăçтарнă. 14 агитатор акан малтанхи кунĕсенчех уя тухнă. Вĕсем, малтанхи кунсенчи ĕçĕн итогĕсене пăхса тухса, уйрăм çитменлĕхсене палăртнă, акана хăвăртрах тата агротехника кăтартнă пек ирттересси çинчен асăрхаттарнă.

Агитаци ĕçĕнче вырăнти фактсемпе усă курни колхозниксене тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать. Çавăнпа «Победа» колхозри агитаторсем хăйсен кашни каласăвĕнчех колхозниксене колхозри ĕçсем çинчен, уйрăм çынсен ĕç тĕслĕхĕсем çинчен каласа пама тăрăшаççĕ. Вырăнти фактсене фронтра пулса иртекен событисемпе çыхăнтараççĕ.

Печников юлташ (ăна 6-мĕш бригада çумне çирĕплетнĕ) каласусене ялахах бригадăра ĕçсем мĕнле пыни çинчен пуçлать. Мĕнле çитменлĕхсем пулчĕç-ха ĕнтĕ? Ĕçре кам кайра пычĕ, камсем малта? Унтан вăл фронтри событисем çинчен, геройла воинсен кĕрешӳри эпизочĕсем çинчен каласа парать.

Агитаци ĕçне учительницăсем Агафия Иванова, Зоя Миронова, парттруппа секретарĕ Анастасия Алексеева, колхоз агрономĕ-комсомолка Иустиния Кузнецова лайăх туса пыраççĕ. Вĕсем колхозниксене хаçатсем вуласа параççĕ, уйрăм темăсем тăрăх калаçусем ирттереççĕ. Çураки вăхăтĕнче кăна вĕсем бригадăсенче 20 калаçăва яхăн ирттернĕ, боевой листоксем нумай кăларнă. Кусемсĕр пуçне вĕсем кăтарту хăмисем организациленĕ, ăмăртăва ертсе пынă.

Агитаторсем çуракинче сухаçăсемпе сеяльщиксем пулса ĕçлерĕç. Василиса Степановăпа Петр Кириллов куллен хăйсен ĕç нормине 120—150 процент тултарса пынă, Иван Осиповăн бригади те çураки ĕçне кĕске срокра вĕçленĕ. Осипов юлташ бригадăри агитатор.

«Победа» колхозра агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх организацилени пĕтĕм ĕçре курăнать. Колхоз çураки ĕçне районра пуринчен малтан пĕтерчĕ. Ĕç пахалăхĕ лайăх, пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çине тенĕ пек ретлĕ сеялкăсемпе акнă, пур культурăсем те тип-тикĕс шăтса тухрĕç. Халь вĕсем çине пăхса кашни колхозник савăнать.

— Акара пирĕн куллен 70 лаша ĕçленĕ, вĕсемпе ĕçлекенсем кашниех нормăсене ирттерсе тултарнă. Кăçал уйрăмах организованно ĕçлени палăрчĕ, 344 гектар çĕре эпир эрне хушшинчех акса пĕтертĕмĕр,—каласа парать колхоз председателĕ Андреев юлташ.

Колхозри агитаторсем хăйсен ĕçне малашне те вăйлатса пыраççĕ. Пĕтĕм ĕçе вĕсем кăçал гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илес задачăпа çыхăнтарса пыраççĕ.

Х. ЛИСИН, (Хамăр корр.).

Вăрнар районĕ, Хыршусĕнчи «Победа» колхоз.

Комсомолăн районри организацийĕ вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре

ВЛКСМ Октябрьски райкомĕ (секретарĕ А. Петрова юлташ) вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре районри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксене тивĕçлипе ертсе пырать. Чи малтанах райкомол ялти çамрăксене ВЛКСМ Центральный Комитечĕн 12-мĕш пленумĕ «Комсомолăн ялсенче çывăх вăхăтра тумалли ĕçĕсем çинчен» йышăннă решение тĕплĕн ăнлантарса панă. Çапла ялти мĕнпур çамрăксене 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен государство планне пурнăçа кĕртме мобилизациленĕ.

Районра 194 комсомолец пĕр таталмасăр ака-суха ĕçĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсенчен уйхир ĕçĕн бригадирĕсем пулса 39 çын, сухаçăсем —142 çын, вăрлăхсем алланă çĕрте 13 çын ĕçлет. Уйрăмăнах Буденный тата Сталин ячĕсемпе тăракан, «Красный танк», «Коммунизм» колхозсенчи комсомолецсем кăтартуллăн, ĕçленине палăртмалла.

Уйхир ĕçне тӳрремĕнех кутшăнса ĕçленипе пĕрлех, комсомолецсем культурăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Ку енĕпе ВЛКСМ райкомĕ районра 3 культбригада организациленĕ. Вĕсенчен иккĕшĕ ялсенче, тепри район центрĕнче ĕçлеççĕ. Çав бригадăсенче комсомолецсемпе çамрăксем тăраççĕ. Вĕсем çураки вăхăтĕнче 23 колхозра пулнă. Уйрăмăнах район центрĕнчи (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ О. Павлова юлташ ертсе пыракан культбригада кăтартуллăн ĕçлет. Бригада Шĕнерпуç, Кутемер, Туçа тата ытти ялсовечĕсенчи колхозсенче пулнă. Чи малтанах культбригада колхозниксене Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнче панă приказĕпе паллаштарнă. Унтан тĕрлĕрен постановкăсем лартса панă, концертсем ирттернĕ, боевой листоксем кăларнă, лозунгсем çырнă. Колхозниксем çамрăксен пултарулăхне пысăк хаваслăхпа пăхнă. Сталин юлташăн боевой приказĕ колхозниксен ĕçлес хастарлăхне татах та ӳстернĕ. Çулпуç приказне вĕсем ĕç нормисене ирттерсе тултарнипе ответленĕ.

Çавăн пекех район центрĕнчи комсомолецсем уйхирте ĕçлекенсене Совет Информаци Бюровĕн сводкисем çинчен пĕлтерсе тăраççĕ. Ку ĕçе ВЛКСМ райкомĕ хăй ертсе пырать, райкомолта ятарласа комсомолецсен дежурствине йĕркеленĕ.

Сурхи уйхир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа ирттерес тесе, ВЛКСМ райкомĕ 7 колхозра комсомолецсен постне тунă. Çак постсем колхозра акмалли вăрлăхсене мĕнле тыткаланине сăнаса пыраççĕ. Хуттăр-Шĕнер, Шупашкар-Ĕсмĕл колхозĕсенче акмалли пăрçа вăрлăхне вăрланă фактсем пулкаланă. Анчах та комсомол посчĕ, çак ĕçе çийĕнчех асăрхаса, ун çинчен колхоз правленине пĕлтернĕ. Кун хыççăн колхозра çавăн пек йĕркесĕрлĕхсем урăх пулман.

ВЛКСМ райкомĕ комсомолецсене халыхи тапхăр ыйтнă пек, пурнăç ыйтнă пек ĕçлеме вĕрентет. Çапла ĕçе тĕрĕс йĕркеленипе комсомол хăйĕн умне ВЛКСМ Центральный Комитечĕн 12-мĕш пленумĕ палăртнă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать.

З. МИТРОФАНОВА. (Хамăр корр.)

ВЛКСМ Центральный Комитетĕнче

Пионер организацине В. И. Ленин ятне панăранпа 20 çул тултарнă май, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ пионер дружинисене лайăх ертсе пынăшăн тата вĕренекенсене воспитани парас тĕлĕшпе учительсемпе шкул директорĕсене активлăн пулăшнăшăн пионервожатăйсен пĕр ушкăнне ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă. Вĕсем хушшинче Улатăрти 7-мĕш номерлĕ вăтам шкулти старши пионервожатăй В. Г. Баканова тата Шупашкар хулинчи хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулти старши пионервожатăй Т. П. Стешова юлташсем пур.

Ачасене паха кĕнекесем парар

Июнĕн 5-мĕшĕнче Чăвашгосиздатра ача-пăча литературине ыйтăвĕпе канашлу пулса иртрĕ. Писательсемпе, поэтсемсĕр тата художниксемсĕр пуçне, канашлура Наркомпросăн, комсомол Обкомĕн, кĕнекепе сутă тăвакан организацисен представителĕсем пулчĕç.

Чăвашгизăн ача-пăча литературин редакторĕ К. Чулкас Чăвашгиз 1943-мĕш çулта тата 1944 çулăн малтанхи çурçулĕ хушшинче ачасем валли мĕнле тата мĕн чухлĕ кĕнеке кăларни çинчен доклад туса панă хыççăн, канашлăва пухăннă юлташсем хăйсен шухăшĕсене каласа пачĕç.

Вăрçă вăхăтĕнче ачасем валли кĕнекесем çителĕксĕр кăларнă. Пуринчен ытла оригиналлă произведенисем сахал тухнă. Пĕчĕк ачасем валли вуçех те кăларман темелле. Çакă вăл, чи малтан, юлашки çулсенче пирĕн писательсем ача-пăча литератури тĕлĕшпе сахал ĕçлениинчен килнĕ. Писательсен ĕçĕнче ку вара пысăк çитменлĕх пулса тăрать.

Малашне, ним тăхтаса тăмасăрах, ача-пăча валли кĕнекесем çырса кăларас ĕçре вирлĕ улшăну тăвас пулать. Пире, чăн малтан, ачасене патриотизмла воспитани паракан, тăван çĕршыва, тăван халăха юратма вĕрентекен, ачасене большевикла воспитани парас ĕçре шкула пулăшса пыракан кĕнекесем кирлĕ. Хальхи совет геройĕ—фронтри те, тылри те — ача-пăча литературин тĕп геройĕ пулса тăмалла.

Уйрăмăн пĕчĕк ачасем валли кирлĕ кĕнекесем кăларассине вăйлатмалла. Ку тĕлĕшрен Чăвашгиз халь пысăк ĕç пуçланă, çитес 2—3 уйăх хушшинче кĕçĕн çулхи ачасем валли 60 ятлă кĕнеке кăларма палăртнă. Вĕсене кăларас ĕçе, писательсемсĕр пуçне, художниксене те анлăн хутшăнтармалла, мĕншĕн тесен кĕçĕн çулхи ачасем валли кăларакан кĕнекесенче ӳкерчĕксем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Анчах та пирĕн художниксем ку таранччен çак питех те кирлĕ ĕçрен аякра тăнă. Малашне çав йăлана пăрахас пулать.

Канашлура тухса каланă писательсем —Шавлы, Эсхель, Эльгер, М. Кошкинский, Кăлган, Наркомпрос представителĕ Башкирова, комсомол Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ Токарев, Союзпечать начальникĕ Гольц тата ытти юлташсем, пурте пĕр шухăшлă пулса, малашне ачасем валли кĕнекесем кăларас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе ĕçлĕ сĕнӳсем пачĕç.

Писательсемпе художниксем пĕр пулса ĕçлесен, Наркомпроспа комсомол Обкомĕ, методистсемпе педагогсем издательствăна куллен пулăшса пырсан, эпир хамăрăн çамрăк ăрăва коммунистла воспитани паракан паха кĕнекесем кăларăпăр.

Л. АГАКОВ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем тăшмана тăтăшах хĕссе пыраççĕ. Июнĕн 4-мĕшĕнче 5-мĕш армийĕн çарĕсем Рим хулине кĕрсе кайнă, хулара нимĕçсем вĕсене хирĕç вăйлă çапăçман. Хальхи вăхăтра 5-мĕш армийĕн çарĕсем Колли Лациоли сăртне пĕтĕмĕшпех контрольлесе тăраççĕ. Малти чаçсем хула витĕр тухса хăшпĕр вырăнсенче Тибр шывĕ урлă каçнă.

8-мĕш армийĕн çарĕсем чылаях малалла куçнă, вĕсем Палестрина, Фиуджи, Пильо, Палиано, Гуарчино (Римран кăнтăр-хĕвелтухăçнерех) тата Каве хулисене тăшманран тасатнă.

Енер союзниксен авиацийĕ тăшманăн Римран çурçĕртерехри тата хĕвеланăçнерехри автотранспорчĕпе чугун çул объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем тăшманăн Çурçĕр Италири сортировка станцийĕсене тата Италипе Франци чиккинчи паха çулйĕрсене тапаннă.

Çавăн пекех тата тăшманăн Югославири вăрçă объекчĕсене те атакăланă.

ЛОНДОН, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, 750 йывăр бомбардировщик, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Турин хулинчен Лион хулине каякан чугун çула тапаннă. Çавăн пекех тата Çурçĕр Италипе Франци хушшинчи чугун çул çинчи пысăк станцисене нумайĕшне атакăланă.

Рим хулинчен 80 километрта тăшманăн автомашинисем нумайăн капланса тулнине асăрханă. Çакă вăл нимĕçсем анлă талккăшпа çурçĕрелле, хăйсен Рим хыçĕнчи линийĕнчен нумай кайра тăракан районалла, чакнине пĕлтерет.

АЛЖИР, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Енер кун каçипех Рим хулипе юнашар ларакан пунктсенче çапăçнă. Нимĕçсен хыçалта пыракан чаçĕсем хытă хирĕç тăнă, хăйсен каялла чакакан çарĕсене хӳтĕлесе пынă. Çав пунктсенче хирĕç тăрса çапăçма чарăнсан, хула варрине кĕмелли çулсем уçăлнă. Çапах та нимĕçсен хыçалта пыракан чаçĕсем, союзниксен çарĕсем малалла куçнине чарма хăтланса, урамсенче çапăçнă. Американецсен чаçĕсем, халăх пурăнакан кварталсенче çапăçса, утăм хыççăн утăм малалла куçса пынă, тăшманăн танкĕсем пенине пусара-пусара лартнă. Çурçĕр тĕлнелле 21 сехет те 15 минутра Рима нимĕçсенчен тасатнă.

Рим хулинчи районсенчен пĕринче фашистсене хирĕç тăракан хула çыннисен ушкăнĕ нимĕç салтакĕсемпе çапăçнă.

ЖЕНЕВА, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер агентстви — Германин информаци бюровĕ июнĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Гитлер ставкин пĕлтерĕвне панă. Çав пĕлтерӳрен нимĕç çарĕсене Рим хулинчен хăваласа кăларни курăнса тăрать. Пĕлтерӳре çапла каланă: Гитлер хушнă тăрăх нимĕç çарĕсем Рим хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çĕнĕ позицисем йышăннă, тенĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн çарĕсем Тибр шывĕ урлă каçнă та Рим хулинчен çурçĕртерехре малалла тапăнса пыраççĕ. Хулара пысăк ишĕлӳсемех пулман. Кессельринг çарĕсем виçĕ пысăк çулпа çурçĕрелле Витербо тата Терни патнелле, çавăн пекех тата Тиренски тинĕс хĕррипе каялла чакаççĕ. Вĕсем Римран çурçĕрелле питĕ вăрахăн куçаççĕ, мĕншĕн тесен Рим хулинчен 80—100 километр тăршшĕнче пĕтĕм çулсем нимĕç обозĕсемпе тулса ларнă. Тăшман вăрçă япалисене питĕ нумай пăрахса хăварнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман обозĕсене чылай вăйлă сиен кӳрет, автомашинăсене вут тивертсе çунтара-çунтара ярать, кĕперсемпе çулсене ише-ише антарать.

Апеннин тăвĕсем патне çитиччен нимĕçсен пытанса хӳтĕленмелли оборона линийĕ текех çук. Апеннин тăвĕсем пĕр тинĕс çыранĕнчен — Пиза хули патĕнчен пуçланаççĕ те тепĕр тинĕс çыранне — Римини хули патне çитиччен тăсăлса выртаççĕ.

Адриатика тинĕсĕ хĕрринче нимĕçсем чакни çук-ха. Анчах та вĕсен хĕвелтухăç çыранĕсенчи позицийĕсем умĕнче хăрушлăх тухса тăрать, мĕншĕн тесен американецсен 5-мĕш армийĕ Рим хулинчен Адриатика тинĕсĕ патнелле каякан пур çулсене те хăй аллине туртса илме пуçланă ĕнтĕ.

Акăлчансен 8-мĕш армийĕн çарĕсем пĕтĕм фронт талккăшĕпех малалла тапăнса пыраççĕ. Союзниксен çарĕсене хирĕç тусем çинче нимĕçсем хаяррăн тăрса çапăçаççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен авиацийĕ Рим хулинчен çурçĕртерехре нимĕçсенне сахалтан та 1200 грузовикне пĕтерсе тăкнă, сиенленĕ.

ИТАЛИРИ ПАРТИЗАНСЕН ĔÇĔСЕМ

АЛЖИР, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Çурçĕр тата Вăтам Италире партизансен ĕçĕсем вăйлансах пыраççĕ. Нимĕçсен оккупаци çарĕсемпе Муссолини жандармерийĕ хăйсен хаяр террорĕпе партизансене хăратаймаççĕ. Партизансен ушкăнĕсем Рим районĕнче нимĕç çарĕсен тылĕнче кĕрешеççĕ. Вĕсем унта нимĕçсем каялла чакакан çулсене тапăнаççĕ. Мачерата провинцийĕнче партизансемпе нимĕç çарĕсем хушшинче çапăçусем пыраççĕ.

Илнĕ хыпарсем тăрăх, Пьемонтри итальянец-партизансем Тури Савойăри француз-партизансемпе пĕр-пĕринпе çыхăну тытса нимĕçсене хирĕç çапăçаççĕ. Нумаях пулмасть француз-партизансемпе итальянец-партизансем, пĕрле кĕрешсе, Пĕчĕк Сен-Бернар перевалне контрольлесе тăма тытăннă.

ИТАЛИ КОРОЛĔ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

АЛЖИР, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Бари хулинчи радио паян çапла пĕлтернĕ: Итали королĕ Виктор-Эммануил хăй король пулма пăрахни çинчен каланă. Вăл—малалла Итали королĕ хăйĕн ывăлĕ принц Пьемонтский пултăр, тенĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ракетлă снарядсемпе усă куракан «Тайфун» йышши самолетсем тата бомбăсем тĕл пăрахакан «Спитфайр» йышши самолетсем нимĕçсен çурçĕр-хĕвеланăç Европăри радио линийĕсене çĕмĕреççĕ. Тăшман оккупациленĕ территорире союзниксен самолечĕсем нимĕçсен йышлă радиоцентрĕсене пыра-пыра çапаççĕ.

Енер союзниксен авиацийĕ тăшманăн çурçĕр Францири чугун çул объекчĕсемпе вагонĕсене тапаннă.

Июнĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем тăшманăн Франци çыранĕнчи тата Кельн хулинчи (Германи) вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен авиацийĕ юлашки эрне хушшинче нимĕçсен 443 самолетне персе ӳкернĕ. Союзниксен Европăра 223 самолет пĕтнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН МАЙ УЙĂХĔНЧИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтернĕ: май уйăхĕнче нимĕçсен Европăри объекчĕсем çине 100.000 тонна ытла бомба пăрахнă. Англири тата Италири базăсенче вырнаçса тăракан самолетсем 130.000 вĕçев тунă.

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официально йĕркепе çапла пĕлтернĕ: май уйăхĕнче Америкăн Англири тата Италири аэродромсенче вырнаçса тăракан сывлăш çар вăйĕсем нимĕçсен Германири, вĕсем оккупациленĕ çĕршывсенчи тата Балканри вăрçă объекчĕсем çине 63.000 тоннă ытла бомба пăрахнă. Сывлăшри çапăçусенче 1.268 тăшман самолетне пĕтернĕ.

Америка авиацийĕн 481 йывăр бомбардировщик тата 232 истребитель пĕтнĕ. Ку вăл çав операцисенче пулнă мĕнпур бомбардировщиксен 1,59 процентĕ, мĕнпур истребительсен 1,19 процентĕ пулать.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

Шупашкарти кооперации техникумĕ çак отделенисене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет: бухгалтерсен отделенине, таваровведсен отделенине, пĕрлешсе апатланас ĕçĕн отделенине.

2-мĕшпе 3-мĕш курсне техникумсенче çавăн пек курссенче вĕреннисене илеççĕ. 2-мĕш курса вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

3-мĕш курса вĕренме кĕнĕ арçынсене вĕренсе тухиччен çар службине илмеççĕ.

Техникумра 3 çул вĕренмелле.

Заявленисене июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 20-мĕшĕччен илеççĕ. Испытанисем августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен пыраççĕ. Испытанисем вырăс чĕлхипе, литературăпа, Конституципе, математикăпа тата географипе пулаççĕ. 7-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлмелле.

Студентсене пурне те стипенди параççĕ, рабочисемпе тан снабжени параççĕ, выртса тăмалли вырăнсем параççĕ, общижитие вырнаçтараççĕ.

Адрес: гор. Чебоксары, Театральная 1/5. ДИРЕКЦИ.

Завода çакăн пек работниксем кирлĕ: технологсем, ОРС валли главнăй бухгалтер, секретарь-машинисткăсем, шутпа контора работникĕсем, кладовщиксем тата çакăн пек рабочисем: токарьсем, фрезеровщиксем, револьверщиксем, слесарьсем, гальваниксем, волочильщиксем, штамповщиксем, электромонтерсем, контролерсем, строительнăй рабочисем, уборщицăсем, подсобнăй рабочисем тата курьерсем.

Вахтерсем (охранниксем), арçынсемпе хĕрарăмсем, тата пушартан сыхлакан работниксем кирлĕ. Хваттер параççĕ.

Заводăн транспорт цехне çакăн пек работниксем кирлĕ: рулевой е моторист-рулевой, моторсем, поездсем пухса хатĕрлекенсем, сцепщиксем, стрелочниксем, шоферсем, мотовозсем, вагонсене пăхакансем, çул рабочийĕсем, грузчиксем тата возчиксем. Общежити параççĕ.

Çавăн пекех тата урăх квалификаци вĕренес текенсене (14 çула çитнĕ е унтан иртнĕ çынсене) илеççĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла-Маркса, 80. Бюро пропусков Куллен 11 сехетрен пуçласа 3 сехетчен ыйтма юрать. 5—3

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР паянтан, июнĕн 7-мĕшĕнчен, пуçласа кунсеренех „МАРТ—АПРЕЛЬ" ятлă саслă, илемлĕ çĕнĕ фильм кăтартать.

Тĕп рольсенче:

Янина Жеймо—Катя Веселова,
Олег Жаков—капитан Жаворонков,
Софья Ланская—Люба Михайлова.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малалли кунсем валли те сутаççĕ.

Коллективсем хăйсен членĕсем валли билетсем малтанах илсе хума пултараççĕ.

Часах „СЕВЕРНАЯ ЗВЕЗДА" ятлă американецсен çĕнĕ, саслă, илемлĕ фильмне кăтартма пуçлаççĕ.

Россглаввинон Шупашкарти эрех комбинатне ялан ĕçлеме химик-лаборант тата инженер-строитель кирлĕ. Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная слобода, 21, Россглаввино. 3—3.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Госпланăн Чăваш республикинчи уполномоченнăйпе Шупашкарта ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: секторсен начальникĕсем, экономистсем, ĕçсен управляющийĕ, бухгалтерсем, статистиксем, секретарьсем, машинисткăсем, шоферсем. Ĕç укçине ставка тăрăх тӳлеççĕ..

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Дом советов, 4-й этаж, ком. 401. 2—1.

Ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: доверенăй врач (ĕç укçи 800 тенкĕ), оргинструктор тата çар çыннисен членĕсене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен инспектор. Условисем çинчен пĕлме тата ĕçе кĕме заявлени пама çак адреспа пымалла: гор. Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, 21. Ĕçлеме илнисене хваттер параççĕ.

Чувашпромстрахкасса.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 60169 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.